28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АПРЕЛЬ
10
ЫТЛАРИКУН
68(6819) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА
СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 3-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне ВАСИЛЕВСКИЕ
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника ПОКРОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, урамсенче пынă вăйлă çапăçусем хыççăн, нимĕç çарĕсен Кенигсбергри группине çапса аркатасшăн вĕçленĕ те паян, апрелĕн 9-мĕшĕнче, Хĕвелтухăç Пруссин крепоçĕпе тĕп хулине—КЕНИГСБЕРГ хулине,—нимĕçсен Балтика тинĕсĕ çинчи оборонин стратегиллĕ паха узелне штурмласа туртса илнĕ.

Кунăçиччĕнхи çапăçусенче 20 сехет тĕлне фронт çарĕсем нимĕçсен 27.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, çавăн пекех тата хĕçпăшалпа ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

Крепость коменданчĕ инфантери генералĕ ЛЯШ тата унăн штабĕ пуç пулса тăракан Кенигсберг гарнизонĕн юлашкийĕсем 21 сехет те 30 минутра хирĕç тăма чарăннă та хĕçпăшала пăрахнă.

КЕНИГСБЕРГ хулипе крепоçне туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: арми генералĕн БАГРАМЯНАН, КУРАСОВ генерал-полковникăн, ГАЛИЦКИЙ генерал-полковникăн, БЕЛОБОРОДОВ генерал-лейтенантăн, ОЗЕРОВ генерал-лейтенантăн, ЛЮДНИКОВ генерал-лейтенантăн, СЕМЕНОВ генерал-лейтенантăн, МАСЛЕННИКОВ генерал-майорăн, ГАРНИЧ генерал-майорăн, СИМИНОВСКИЙ генерал-майорăн, ЗАВАДОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ГУРЬЕВ генерал-майорăн, КОШЕВОЙ генерал-лейтенантăн, ЛОПАТИН генерал-лейтенантăн, КСЕНОФОНТОВ генерал-лейтенантăн, СЕДУЛИН генерал-майорăн, ЗАХАРОВ генерал-лейтенантăн, ИВАНОВ генерал-лейтенантăн, МУЛЬТАН генерал-майорăн, ОЛЕШЕВ генерал-майорăн, ИВАНОВ генерал-майорăн, ПОПОВ генерал-майорăн, ТОЛСТИКОВ полковникăн, ПЕТЕРС генерал-майорăн, ЦЫГАНОВ генерал-майорăн, ПРОНИН генерал-майорăн, КАРИЖСКИЙ генерал-майорăн, ЧЕРНОВ генерал-майорăн, БУРМАКОВ генерал-майорăн, МАСЛОВ генерал-майорăн, ЩЕРБИН генерал-майорăн, КРАСНОВ полковникăн, ТЫМЧИК генерал-майорăн, ДОМРАЧЕВ полковникăн, ЧЕРЕПАНОВ полковникăн, ЛУЦКЕВИЧ генерал-майорăн, САФРОНОВ полковникăн, КРАСНОВСКИЙ полковникăн, ДУЛОВ полковникăн, БЕЛОНОГОВ генерал-майорăн, КРОНИК генерал-майорăн, ДАЛМАТОВ генерал-майорăн, ПЕРЕВОЗНИКОВ полковникăн, ЦВЕТКОВ полковникăн, МАЛЮКОВ генерал-майорăн, ХВОСТОВ генерал-майорăн, СМИРНОВ полковникăн, ТАРАСОВ полковникăн, КАЗАК полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн БАРСУКОВАН; артилери генерал-полковникĕн ХЛЕБНИКОВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн НИЛОВСКИН, артиллери генерал-лейтенанчĕн СЕМЕНОВАН, артиллери генерал-майорĕн ЩЕГЛОВАН, артиллери генерал-майорĕн ВАСИЛЬЕВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн БАЖАНОВАН, артиллери генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕВАН, СТРУЕВ полковникăн, АВРААМОВ полковникăн, ПАВЛОВ полковникăн, РАДЧЕНКО полковникăн, ТИЩЕНКО полковникăн, СЕРДОБОЛЬСКИЙ полковникăн, ПОПОВ полковникăн, КИРИЛЛОВ полковникăн, КОСТИКОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн ПОПОВАН, КАРСАНОВ генерал-майорăн, артиллери генерал-майорĕн КОЛОТИЛОВАН, артиллери генерал-майорĕн ЯКОВЛЕВАН, КУЗНЕЦОВ полковникăн, ТУРЧАНИНОВ полковникăн, КОРОТУН полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн РОДИНАН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн СКОРНЯКОВАН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ГУДКОВАН, ЛЕСОВОЙ полковникăн, МЕНЬШОВ полковникăн, ШМЫРЕВ полковникăн, ЦИНЧЕНКО полковникăн, ПРОХОРЕНКО подполковникăн, ОХРИМЕНКО подполковникăн, ПЕТРОВСКИЙ полковникăн, КУЗНЕЦОВ полковникăн танкисчĕсем; Авиаци Главнăй Маршалĕн НОВИКОВАН, Авиаци Главнăй Маршалĕн ГОЛОВАНОВАН, авиаци генерал-полковникĕн ХРЮКИНАН, авиаци генерал-полковникĕн ПАПИВИНАН, авиаци генерал-полковникĕн САМОХИНАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ДАГАЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ПЕРМИНОВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УШАКОВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ЛОГИНОВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн НЕСТЕРЦЕВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн СЧЕТЧИКОВАН, авиаци генерал-майорĕн БЕЛОВАН, авиаци генерал-майорĕн ИВАНОВАН, авиаци генерал-майорĕн БОРИСЕНКАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТУПИКОВАН, авиаци генерал-майорĕн ШЕВЧЕНКАН, авиаци генерал-майорĕн НЕЧИПОРЕНКАН, авиаци генерал-майорĕн ЗАХАРОВАН, авиаци генерал-майорĕн МОЛОКОВАН, авиаци генерал-майорĕн АЛЕКСАНДРОВАН, авиаци генерал-майорĕн ЛЕБЕДЕВАН, авиаци генерал-майорĕн БАЛАШОВАН, авиаци генерал-майорĕн ЧЕМОДАНОВАН, авиаци генерал-майорĕн БРОВКОН, авиаци генерал-майорĕн ШИРОКИЙĔН, авиаци генерал-майорĕн ТИХОНОВАН, авиаци генерал-майорĕн НАБОКОВАН, авиаци генерал-майорĕн БЛИНОВАН, авиаци генерал-майорĕн КОРТАКОВАН, авиаци генерал-майорĕн ГЛУШЕНКАН, СКОК полковникăн, ПРУТКОВ полковникăн, ХОТМИНСКИЙ полковникăн, ЗАКЛЕП подполковникăн, ЧУЧЕВ полковникăн, ЗИМИН полковникăн, АНДРЕЕВ полковникăн, САЖНЕВ подполковникăн, ДЕЛЬФИНО майорăн, ЛЕБЕДЕВ полковникăн, БЕЛЫЙ полковникăн, ФОКИН полковникăн, КУЧМА полковникăн, КУРБАТОВ полковникăн, РЫКАЧЕВ полковникăн, ПЛАХОВ полковникăн, ГОРЕВАЛОВ полковникăн, МАНЖОСОВ полковникăн, КУРОЧКИН полковникăн, СЛЕПЕНКОВ полковникăн летчикĕсем, инженери çарĕсен генерла-лейтенанчĕн БАРАНОВАН, инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОСАРЕВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОЛМАКОВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн МЕЛЬНИКОВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ПОШЕХОНЦЕВАН, техникăллă çарсен генерал-майорĕн СМИРНОВАН, ГРИГОРЕНКО полковникăн, МОРГУНОВ полковникăн, ЛУКАШЕНКО полковникăн, СОКОЛОВ полковникăн, КОРОТКОВ полковникăн, ТИМОШЕНКО подполковникăн, ЧЕРЕПАНОВ подполковникăн саперĕсем, çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУРОВАН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн БАБКИНАН, ДАВЫДЕНКО полковникăн, ЗАХАРОВ полковникăн, ТЕЙКОВЦЕВ полковникăн, ЦЫЛБОВ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕçтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, КЕНИГСБЕРГ хулипе крепоçне туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «КЕНИГСБЕРГСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 9-мĕшĕнче, 24 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, виççĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, нимĕç çарĕсен Кенигсбергри группине çапса аркатассине вĕçленĕскерсене тата КЕНИГСБЕРГ хулипе крепоçне туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, КЕНИГСБЕРГ хулипе крепоçне туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи апрелĕн 9-мĕшĕ. № 333.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 7-мĕшĕнче КАРПАТ тăвĕсен тăрăхĕнче, РУЖОМБЕРОК хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, УКРАИНАРИ 4-мĕш фронт çарĕсем халăх пурăнакан 30 пункта ытла çапăçса туртса илнĕ, вăл шутра—БРЕНКА, МАЛИНКА, КАМЕШНИЦА, УЙСОЛЫ, РОЗТОКИ, СТАНКОВАНИ, ГОМБАШ ятлă пысăк ялсем.

БРАТИСЛАВА хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата çурçĕртерехре УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах малалла тапăнса пынă, НОВЕ-МЕСТО хулине тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—КШИННА, УГРОВЕЦ, КАЛНИЦА, ЧАХТИЦЕ, КОСТОЛНЕ, БРЕЗОВА, ГЛБОКЕ, СЕНИЦА, ЧАЧОВ, ШТЕПАНОВ, СМОЛИНСКЕ ятлă пысăк ялсем. Ку районра венгерсен 24-мĕш пехотнăй дивизийĕн юлашкийĕсем хăйсен пĕтĕм хĕçпăшалĕпе, дивизи командирĕпе Мужон полковникпа тата унăн штабĕпе пĕрле Хĕрлĕ Çар енне куçнă.

ВЕНА районĕнче УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем çаплах малалла тапăнса пынă. МЕДЛИНГ, ПРЕСС БАУМ, КЛОСТЕРНОЙБУРГ хулисене туртса илнĕ. ВЕНАРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ДУНАЙ шывĕ çине тухнă та тăшманпа ВЕНА хулин кăнтăр пайĕнчи урамĕсенче çапăçма тытăннă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах БАЛАТОН кÿллинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре фронт çарĕсем, Болгари çарĕсемпе пĕрле наступлени туса пырса, ЧАКОВЕЦ хулипе чугун çул узелне, МУШСКО-СРЕДИШТЕ хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ. Апрелĕн 6-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 3.600 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—11, танксем—22, хир тупписем—78, пулеметсем—127.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Апрелĕн 6-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 28 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 14 самолетне персе ÿкернĕ.

АПРЕЛĔН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Паян пирĕн çарсем КЕНИГСБЕРГ хулипе крепоçне штурмлама тытăннă. КЕНИГСБЕРГА çурçĕр-хĕвеланăç енчен тапăнакан БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем кун каçиччен хаяррăн çапăçнă хыççăн крепость позицийĕсен тулашри ункине татнă та хулан ИУДИТТЕН, ЛАВСКЕН, РАТСХОФ, АМАЛИЕНАУ, ПАЛЬФЕ районĕсене туртса илнĕ. Хулана кăнтăр енчен тапăнса пыракан фронт çарĕсем хулан ШЕНФЛИС, ШПАЙХЕРСДОРФ, ПОНАРТ, НАССЕР ГАРТЕН, КОНТИНЕН районĕсене, тĕп вокзала, Кенигсберг портне туртса илсе, ПРЕГЕЛЬ шывĕ урлă каçнă та хулан КОССЕ районне йышăннă, вара унта Кенигсберга çурçĕр-хĕвеланăç енчен тапăнакан çарсемпе пĕрлешнĕ. Çапла вара, фронт çарĕсем КЕНИГСБЕРГ хулипе крепоçне хÿтĕлекен тăшман çарĕсен самаях пысăк ушкăнне пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ. Кун каçиччĕнхи çапăçусенче фронт çарĕсем 15.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

БРЕСЛАУ районĕнче хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

БРАТИСЛАВАРАН çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕртерехре УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çаплах малалла тапăнса пынă, Чехословаки çĕрĕнче халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—ПРАВНО, ГАЙДЕЛ, ТУЖИНА, СЛАТИНА, ЯСТРЕБЬЕ, ДОЛМЫ ВИХОН, МИЯВА, КУНОВ, КОВАЛЕВ, УНИН, ГБЕЛИ, БРОДСКЕ ятлă пысăк ялсем. Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем БРАТИСЛАВАРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре МОРАВА шывĕпе ДУНАЙ шывĕ урлă каçнă та АНГЕРН, БАУМГАРТЕН, МАРХЕГГ, МАРКТХОФ, ЭНГЕЛЬХАРТШТЕТТЕН, ЛОЙ-МЕРСДОРФ, КОПФШТЕТТЕН, ПФАРАМА, ЭКАРТЗАУ ялĕсем вырнаçса ларнă плацдарма туртса илнĕ, унтан çав плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă. Апрелĕн 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 2.300 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

ВЕНА районĕнче УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем çаплах малалла тапăнса пынă, ТУЛЛЬН хулипе НОЙ-ЛЕНГБАХ хулине тата ЮДЕНАУ, ЗИГХАРСТКИРХЕН, РАППОЛЬТЕНКИРХЕН, АЛЛАНД ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ тата ВЕНА хулин кăнтăр пайĕпе хĕвеланăç пайĕнчи урамсенче ăнăçлăн çапăçнă, арсенала тата хĕвелтухăç енчи, кăнтăр енчи, хĕвеланăç енчи вокзалсене йышăннă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах ВИНЕР НОЙШТАДТ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре фронт çарĕсем Австри çĕрĕнче халăх пурăнакан 80 пункта ытла çапăçса туртса илнĕ, вăл шутра—КИРХБЕРГ, АСПАНГ, МЕНИХКИРХЕН, МЕНИХВАЛЬД, ФРИДБЕРГ, ПИНКЭФЕЛЬД, ОБЕРВАРТ, ГРОССПЕТЕРСДОРФ, МОШЕНДОРФ ятлă пысăк ялсем.

Апрелĕн 7-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 5.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—8, танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем—32, хир тупписем—107, пулеметсем—190, автомашинăсем—300 ытла, паровозсем—14, вагонсем—1.058.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Апрелĕн 7-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 60 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 33 самолетне персе ÿкернĕ тата КЕНИГСБЕГПА ПИЛЛАУ районĕсенчи аэродромсенче 50 самолет пĕтерсе тăкнă.

И. В. Сталин К. Черчилль госпожана йышăнни

Апрелĕн 7-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Британин «Российăна пулăшмалли фонд» Комитечĕн Председательне Клементина Черчилль госпожана йышăннă.

Йышăнура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов тата «Российăна пулăшмалли фонд» Комитечĕн Секретарĕ М. Джонсон госпожа пулнă.

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче Югославири Министрсен Совечĕн Председателĕ И. Броз-Тито тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ И. Шубашич господин ячĕпе пулнă ирхи апатлану

Апрелĕн 7-мĕшĕнче СССР Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче Югославири Министрсен Совечĕн Председателĕ И. Броз-Тито Маршал тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ И. Шубашич господин ячĕпе ирхи апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура çаксем пулнă: И. Броз-Тито Маршал, Югославин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ И. Шубашич господин, Черногори Ĕçĕсен Министрĕ М. Джилас генерал-лейтенант, Суту-илĕпе Снабжени Министрĕ М. Петрович господин, Сĕрт-ту промышленность Министрĕ Б. Андреев, Югославин СССР-ти Посолĕ Симич господин, Югославин СССР-ти Çар Миссийĕн Начальникĕ Р. Приморац генерал, Тито Маршалпа килнĕ ытти çынсем тата Югославин Мускаври Посольствин ответлă сотрудникĕсем.

Совет Союзĕ енчен апатланура çаксем пулнă: А. И. Микоян, флот адмиралĕ Н. Г. Кузнецов, А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, артиллерин Главнăй Маршалĕ Н. Н. Воронов, Хĕрлĕ Çарăн Генеральнăй Штаб Начальникĕ арми генералĕ А. И. Антонов, СССР-ĕн Югославири Посолĕ И. В. Садчиков, авиаци Маршалĕ Ф. Я. Фалалеев, А. Т. Крутиков, Г. М. Попов, Ф. И. Голиков генерал-полковник, СССР Наркоминделĕн 4-мĕш Европа Отделĕн заведующийĕ А. А. Лаврищев, СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков, А. Ф. Гундоров генерал-лейтенант, Совет Союзĕн Югославири Çар Миссийĕн Начальникĕ Ф. Киселев генерал-майор, М. П. Кутузов генерал-майор, СССР Наркоминделĕн ответлă сотрудникĕсем.

Апатлану пуçлăн та кăмăллăн пулса иртнĕ.

ÇАМРАК ÇЫННАН СОВЕТ ЛИТЕРАТУРИНЧИ САНĔ

Мускаври комсомол организацийĕсем «Çамрăк çыннăн совет литературинчи сăнĕ» темăпа литература вечерĕсем туса ирттересçĕ. Çамрăксем Б. Горбатовăн «Непокоренные», К. Симоновăн «Дни и ночи», В. Кожевниковăн «Март-апрель», П. Антокольскин «Сын», М. Алигерăн «Зоя», Л. Кассилĕн «Дорогие мои мальчишки» произведенийĕсене сÿтсе-яваççĕ. Сÿтсе-явас ĕçе кĕнеке авторĕсем, литература преподавателĕсем хутшăнаççĕ, 140 литература вечерĕ ирттернĕ те ĕнтĕ. Кунсăр пуçне; вулакансен конференцийĕсене ирттерĕççĕ. (ТАСС).

Государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татаççĕ

ÇĔРПУ. Иваново ял Советне кĕрекен «Ударник», «Луч», «Правда» тата «1905 год» колхозсенчи комсомолецсем колхозниксем хушшинчи агитациллĕ-массăллă ĕçе нумай лайăхлатрĕç. Вĕсем Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, фронтран килекен хыпарсене колхозниксене куллен те тĕплĕн ăнлантарса параççĕ, час-часах политикăллă ыйтусемпе докладсем, калаçусем ирттереççĕ. Çав докладсемпе калаçусене колхозсемпе колхозниксем умĕнче тăракан задачăсемпе çыхăнтарса пыраççĕ. Массăллă ĕçе лайăх туса пынине пула, колхозниксем государство умĕнчи парăмсене вăхăтра тата срокчен парса татма тăрăшаççĕ. Ку ял Совет... колхозсем 1945 çулшăн государствăна аш-какай парса татрĕç, нумай колхозниксем 1946 çулшăн аванс шучĕпе параççĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Ямайкасси ял Советне кĕрекен «Большевик» колхоз членĕсем Тăван çĕршывпа фронта ытларах апат-çимĕç, укçа-тенкĕ парса пулăшма тăрăшаççĕ. Чылай колхозниксем укçа-тенкĕ парăмĕсене пур тÿлевсем енĕпе те парса татнă. А. Феодоров, Е. Михайлова, П. Егоров, Т. Евгеньев колхозниксем 1945 çулшăн аш-какай парса татнă. Колхоз Хĕрлĕ Çар фондне 692 килограмм аш, 850 литр сĕт тата 179 çăмарта панă.

Г. ЗАХАРОВ.

Австрири лару-тăру

Совет Правительстви Австри пирки калани

Фашистла нимĕç çарĕсене арката-арката хăваласа пырса, Хĕрлĕ Çар Австри çĕрне кĕрсе кайрĕ тата Австри столицине—Вена хулине хупăрласа илчĕ.

Австри халăхĕ Германири нимĕçсем пек мар, вăл хăйне нимĕçсем урăх çĕре куçарма хăтланнине хирĕç тăрать, хăйĕн вырăнĕнчех юлать. Хĕрлĕ Çара Австри халăхĕ гитлеровецсен пусмăрĕнчен хăтаракан çар вырăнне шутласа, вăл ăна хапăл туса кĕтсе илет.

Совет Правительстви Австри территорин пĕр-пĕр пайне тытса илес е Австрин социальнăй стройне улăштарас тĕллев лартмасть. Совет Правительстви Австрин никама пăхăнманлăхĕ çинчен союзниксен Мускаври декларацийĕнче калана пек шухăшлать. Çав декларацие вăл пурнăçа кĕртсе пырĕ. Вăл фашистла нимĕç оккупанчĕсен режимне пĕтерме тата Австрире çĕнĕрен демократиллĕ йĕркепе демократиллĕ учрежденисем туса хума пулăшĕ.

Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандованийĕ совет çарĕсене çав ĕçре Австри халăхне пулăшма приказ панă.

Толбухин Маршал Венăри халăха чĕнсе калани

Вена хулинчи халăх!

Хĕрлĕ Çар, нимĕç фашисчĕсен çарĕсене арката-арката, Вена патне пырса çитрĕ.

Хĕрлĕ Çар Австри çĕршывне туртса илес шухăшпа мар, нимĕç фашисчĕсен çарне çĕмĕрсе тăкса, Австрие нимĕçсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларас пĕртен пĕр шухăшпа Австрие пырса кĕчĕ.

Хĕрлĕ Çар Австрин никама пăхăнманлăхĕ пирки союзниксен Мускаври декларацийĕнче калана пек шухăшлать, вăл Австрире 1938-мĕш çулччен, урăхла каласан—Австрие нимĕçсем пырса кĕриччен пулнă йĕркесене туса хума пулăшĕ.

Хĕрлĕ Çар Австри халăхĕпе çапăçмасть, вăл нимĕç оккупанчĕсемпе вăрçать, çавăнпа та Австри халăхĕ хăйĕн мирлĕ ĕçне пĕр шикленмесĕр туса пыма пултарать. Гитлеровецсем—Хĕрлĕ Çар национал-социалистсен партийĕн пур членĕсене те пĕтерсе тăкать, теççĕ. Çакă вăл—суя сăмах. Национал-социалистсен партине салатса ярĕç, анчах та унăн рядовой членĕсене, вĕсем совет çарĕсене хирĕç тăмасан, тивмĕç.

Австри столицине Вена хулине нимĕçсем пуç пулса тăнинчен ирĕке кăлармалли сехет çитрĕ, анчах та каялла чакакан нимĕç фашисчĕсен çарĕсем Вена хулине те Будапешт пекех çапăçу хирĕ туса хурасшăн. Ун пек тусассăн, Вена хулине те, унăн халăхне те Будапештри пек ишĕлÿсемпе вăрçă хăрушлăхĕ пырса çапĕç.

Австри столицине, унăн культурăпа искусствин историллĕ памятникĕсене сыхласа хăварас тесе, çапла тума хушатăп:

1. Пĕтĕм халăхăн, уншăн Вена хаклă пулсан, хуларан урăх çĕре тухса каймалла мар, мĕншĕн тесен Венăна нимĕçсенчен тасатнипе эсир вăрçă хăрушлăхĕнчен çăлăнса юлатăр, кам урăх çĕре кайма шутлакана нимĕçсем вилме кăна хăваласа каяççĕ.

2. Нимĕçсене Венăра минăсем лартма, кĕперсене сывлăша сиктерме тата çуртсенчен укрепленисем тума памалла мар.

3. Венăна гитлеровецсем ишĕлтерессинчен хÿтĕлесе хăвармашкăн нимĕçсене хирĕç кĕрешÿ пуçласа ямалла.

4. Венăри çынсен пурин те нимĕçсене Венăран промышленность оборудованине, гаварсене, апат-çимĕçе кăларса кайма активлăн кансĕрлемелле, Вена халăхне çаратма памалла мар.

Вена гражданĕсем!

Австри столицине Венăна ирĕке кăларма Хĕрлĕ Çара пулăшăр, Австрие нимĕç фашисчĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларас ĕçе хăвăр пая хывăр.

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсен Командующийĕ
Совет Союзĕн Маршалĕ ТОЛБУХИН.
1945 çулхи апрелĕн 6-мĕшĕ.

Финанс работникĕсен республикăри канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта финанс работникĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу 1945 çулхи 1-мĕш кварталти ĕçсен итогĕсем çинчен тата II-мĕш кварталти задачăсем çинчен сÿтсе-яврĕ. Çак ыйтупа Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ И. Золотников юлташ доклад туса пачĕ.

Республикăри малта пыракан районсем,— тет докладчик, — мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн сĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, çĕршывпа фронта кирлĕ укçа-тенкĕ вăхăтра пухса пама тăрăшаççĕ. Куславкка, Октябрьски, Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри, Элĕк районĕсем 1-мĕш кварталта укçа тенкĕ пухмалли плана пĕтĕмĕшпех тата пур тÿлевсем тăрăх та тултарнă. Çавăн пекех Çĕрпÿ, Калинино, Ишлей, Елчĕк районĕсем, Шупашкарпа Улатăр хулисем те иртнĕ кварталта укçа-тенкĕ планпа палăртнă чухлех пухнă. Юлашки вăхăтра çак ĕçе Йĕпреç, Канаш, Красноармейски, Шупашкар, Çĕмĕрле, Вăрнар тата ытти районсем те вăйлатрĕç.

Çапах та республикăра укçа-тенкĕ пухас ĕç çителĕксĕр пырать. Республика иртнĕ квартал планне 90,7 процент çеç тултарнă. Республика государство дохочĕсемпе страхсвани планĕсене те чылай тултарман.

Çакă вăл республикăри чылай районсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе начар ĕçленинчен килнĕ. Уйрăмах Улатăр, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Первомайски, Пăрачкав, Сĕнтĕр, Чкаловски, Шăмăршă тата Етĕрне районĕсем юлса пыраççĕ. Вĕсем иртнĕ квартал планне 80 процентран та кая тултарнă.

Хăшпĕр районсемпе хуласенче финанс отделĕсен заведующийĕсем ял Совечĕсенчи хусаллăх кĕнекисене йĕркелесси çине, налог тÿлекенсен счечĕсене тĕрĕс çырасси çине сахал çаврăнса пăхаççĕ, ялсенче укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăмаççĕ. Çавăн пирки хăшпĕр çĕрте налогсене тĕрĕс мар хунисем, фронтовиксен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене тивекен çăмăллăхсене вăхăтра паманнисем пулаççĕ.

Доклад тăрăх прение 32 çын тухса каласрĕ. Вĕсем районсемпе ял Совечĕсенче финанс ĕçĕнче пулакан çитменлĕхсене тишкерчĕç, умра тăракан задачăсене палăртрĕç тата хăйсем мĕнле ĕçлени çинчен каласа кăтартрĕç.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи финанс отделĕн заведующийĕ А. Анкудинов юлташ, налог агенчĕсем—70 çулхи старик Н. Герасимов (Куславкка районĕнчен), А. Нараткина (Вăрнар районĕнчен), Ю. Вечоркина (Октябрьски районран) тата ытти юлташсем те канашлура пулнисене хăйсен опычĕсемпе паллаштарчĕç.

Канашлура пулнă финанс работникĕсем, Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, татăклă обязательствăсем илчĕç. Май уявне тивĕçлипе кĕтсе илес тесе, II-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана майăн 1-мĕшĕ тĕлне районсенче—40 процентран, хуласенче—37 процентран кая мар тултарма, çавăн пекех государство дохочĕсен планне 37 процентран кая мар тултарма пулчĕç.

Чăваш республики 25 çул тултарнине ĕçре çитĕнÿсем тунипе паллă тăвас тесе, июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне II-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана пĕтĕмпех тултарма, çавăн пекех государство дохочĕсен планне 95 процентран кая мар тултарма тата 1-мĕш çурçулти бюджет дохочĕсен планне пур енĕпе те тултарма сăмах пачĕç.

Канашлура пулнисем республикăри мĕнпур финанс работникĕсене çак обязательствăсене срокра тата пĕтĕмпех пурнăçа кĕртессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме чĕнчĕç.

Çыхăну ĕçне лайăхлатма пулчĕç

МУРКАШ. Нумаях пулмасть районри çыхăну конторинче ĕçлекенсен пухăвĕ пулчĕ. Унта Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнасси çинчен сÿтсе-яврĕç. Ăмăртăва хутшăнса, çыхăну работникĕсем телефона йĕркеллĕ ĕçлеттерме, укçа-тенкĕ тупăшне илмелли плана тултарма, хаçат-журналсемпе çырусене вăхăтра валеçсе пама пулчĕç, çыхăну ĕçĕнче ку таранччен пулнă çитменлĕхсене пĕтерме сăмах пачĕç.

Б. ЯКОВЛЕВ.

Фронтран килнĕ çыру

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар тăван çĕршыва кимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатрĕ. Халĕ вăл пирĕнпе союзлă Польша çĕрне тăшманран тасатса çитерчĕ, тискер кайăка хăйĕн çĕрĕ çинче çĕмĕрет.

Эпĕ те, чăваш халăхĕн ывăлĕ, çак чаплă çĕнтерÿсен çулĕ çинче сахал мар çапăçрăм. Иртнĕ çулхи июнь уйăхĕнчен пуçласа, 3000 километр ытла çапăçупа тухрăм. Халĕ, акă, Берлинран инçех те мар çапăçатпăр.

Хаклă земляксем, эпир фронтра чăваш халăхĕн ятне вараламастпăр. Аслă Совет Союзĕнчи ытти халăхсем пекех, хамăрăн Чапаев пек, паттăр çапăçатпăр. Кăçал еплех пулсан та тăшман йăвине—Берлина çĕмĕрсе кĕме хавасланатпăр. Эпир унта пулма тивĕçлĕ, эпир Берлинра пулатпăрах.

Çак çапăçура пире эсир те, хаклă земляксем, колхозсемпе заводсенче стахановла ĕçлесе, тата ытларах пулăшăр. Сирĕн пулăшу, эсир фронтовиксене ялан асра тытса вĕсемшĕн тăрăшни пире çапăçура çĕнĕ вăй-хăват парать.

Салампа Н. ИВАНОВ.
Икĕ орден илнĕ.

Ял Совечĕсен кăçалхи çуракинчи задачисем

Тăван çĕршыв интересĕсем ялхуçалăхне малалла аталантарса пыма хушаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ вырăнти советсен тата колхозсен руководителĕсем колхоз производствине татăклăнрах ертсе пыма, кашни колхозăн уйрăмлăхне пĕлсе тăма тата кая юлакан колхозсене вăхăтра кирлĕ пулăшу пама тивĕçлĕ.

Çураки кампанийĕнче ял Совечĕн ĕççыннисене вăйлă тырпулшăн кĕрешме организацилесе пымалла. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Государствăн ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи планĕ çинчен» йышăннă постановленире колхозсен, МТС-сен, совхозсен, çĕрĕç органĕсен, партипе совет организацийĕсен 1945 çулхи тĕп задачи—тырпулсен тухăçлăхне пур майсемпе те ÿстересси, пухса илнен тĕштырăсен тата ытти ялхуçалăх продукчĕсен пĕтĕм хисепне ÿстересси пулса тăрать, тесе кăтартса пачĕç.

Çакă вăл пирĕн кулленхи ĕçĕн программи пулса тăрать, пирĕн тивĕçлĕх—ăна чыслăн пурнăçа кĕртесси. Партипе правительство çуракине тĕплĕн хатĕрленсе, мĕнпур уйхир ĕçĕсене пахалăхлăн ирттерес тĕлĕшпе панă кăтартусене ял Совечĕн хăйĕн территорийĕнчи колхозсенче пĕтĕм вăя хурса пурнăçа кĕртсе пымалла.

1945 çулхи çуракинче пирĕн умра мĕнле татăклă задачăсем тăраççĕ-ха?

Вăйлă тырпул туса илес ĕçе татса паракан ыйтусенчен пĕри—вăрлăх пулса тăрать. «Мĕн акатăн, çавна выратăн», тесе калать халăхăн ăслă сăмахĕ. Лайăх вăрлăх—ылттăн пурлăх. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çÿлерехре асăннă хăйсен постановленийĕнче çакна кăтартса пачĕç: «1945 çулта çирĕплетнĕ ака планне пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртме май паракан хисеп чухлĕ вăрлăх фончĕсем уйăрса хăварса, вĕсене тасатса хурасси чи кирлĕ ĕç пулса тăрать», терĕç. Малта пыракан чылай ял Совечĕсен председателĕсем партипе правительствăн çав кăтартăвне пурнăçа кĕртрĕç, вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе вĕсем государство хушнă пек ĕçлерĕç.

Çакăнпа пĕрлех, уйрăм ял Совечĕсем вăрлăх ыйтăвĕсемпе пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ, çакă вăл пуринчен малтан Пăрачкав, Кувакино, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсенчи ял Совет председателĕсене пырса тивет. Çав районсенчи нумай колхозсен вăрлăхсем çитмеççĕ. Асăннă районсенчи вырăнти советсемпе çĕрĕç органĕсем 1944 çулта вăрлăхсем тĕлĕшпе вĕсен ĕçсем йывăр пулнинчен хăйсене валли урок туман, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановление, çавăн пекех СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн Андреев юлташăн вăрлăх участокĕсем тĕлĕшпе панă приказне пурнăçа кĕртмен, тырпулсене пăхса çитĕнтерес ĕçе тивĕçлĕ пек йĕркелемен, çавна пула вара начар тырпул туса илнĕ. Çапла, сăмахран, Кувакино районĕнчи «Передовик» колхоз вăрлăх участокĕсем çинчен çурхи тĕштырăсене акнă чухлĕ те пухса илеймен.

Уйхир ĕçĕсем пусланиччен шутлă кунсем кăна юлчĕç. Вăрлăх çителĕксĕр колхозсене ял Совет председателĕсен вăрлăх тупас тĕлĕшпе халех ĕçлĕ пулăшу парас пулать. Шалти мĕнпур ресурссене мобилизацилемелле, колхозсем пĕр-пĕрне вăрлăх парса пулăшассине тата колхозниксенчен вăрлăхлăх тырă киçсен илессине организацилемелле. Пирĕн уйрăм ял Совечĕсен руководителĕсем çав ĕçрен аякра тăраççĕ-ха, вĕсем вăрлăх государствăран е урăх районсенчи колхозсенчен илессине кăна шанса лараççĕ.

Вăрлăхсем хатĕрленипе пĕрлех, вĕсене тасатса сортламалла, акмалли кондицие çитермелле. Лабораторисенче тĕрĕслесе тухнă хыççăн пирĕн республикăра кондициллĕ мар вăрлăхсем 33 процент чухлĕ пурри палăрчĕ. Кондициллĕ мар вăрлăхсем акакан колхоз председателĕсем колхоза та, государствăна та сиен кÿреççĕ, çавăнпа та ĕнтĕ вăрлăхсене тепĕр хут сортласа тасатас тата вĕсене акмалли кондицие çитерес тĕлĕшпе пур мерăсене те йышăнмалла.

Çуракине ирттерес ĕçре МТС-сем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вăрçă МТС работникĕсен ответлăхне ÿстерчĕ.

Ял Совет председателĕсен хăйсем енчен МТС-па колхозсем хушшинчи договорсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине контроллесе тăмалла. Çуракинче пур тракторсене те графикпа тăрăх ĕçлесе пымалла тăвас пулать. Ял Совет председателĕн тракторсем кашни пĕчĕк простой тунипех интересленмелле, МТС директорĕпе пĕрле палăрнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелле. Ял Совет председателĕсен çавăн пекех тата трактористсене лайăхрах пăхассишĕн тăрăшмалла, вĕсем хушшинчи культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелемелле.

Çуракине ăнăçлăн ирттерес ĕçре яланхи пекех лаша тĕп вырăн йышăнса тăрать. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Государствăн колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли 1945 çулхи планĕ çинчен» йышăннă постановленире советпа парти тата çĕрĕç органĕсене, колхозсен председателĕсене, совхозсен директорĕсене лашасем ĕрчетес ĕç çине тимлĕхсĕр пăхнине—государствăпа колхозсене сиен кÿрекен çав тимсĕрлĕхе пĕтерме хушаççĕ. Партипе правительство лаша пирки кăтартса панине ял Совечĕсен пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртмелле. Лашасене начар е чунсăррăн пăхни çинчен калакан кашни факта çийĕнчех ял Совечĕн сÿтсе-явмалла та çав ĕçри çит-

А. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ

менлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла.

Пĕлтĕр чылай районсенчи колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарман пирки, лашасене çуркунне ĕç нумайрах тивет. Çавăнпа та ĕнтĕ колхозсемпе ял Совечĕсен председателĕсем лашасем çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхма тивĕçлĕ.

Колхозсенче çурхи уйхир ĕçĕсен тапхăрĕ валли паха утăпа тĕштырă апачĕ çителĕклĕ таран уйăрса хăвармалла, ут таврашĕсемпе транспорт инвентарьне халех юсаса йĕркене кĕртмелле, конюхсене ĕçшĕн лашасем мĕнлине кура тÿлесе пымалла.

Кăçалхи çул çуракинче колхозсемпе колхозниксен ĕнисемпе тата вăкăрсемпе усă курасси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхас пулать. Ял Совет председателĕсен çак ĕçе куллен ертсе пымалла.

Вăйлă тырпул туса илмелли паха майсенчен пĕри — агротехника мероприятийĕсене анлăн пурнăçа кĕртни пулса тăрать. Анчах пирĕн вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсемпе витĕнсе, агротехника мероприятийĕсене çулсеренех пурнăçа кĕртсе пыман колхоз руководителĕсем пур-ха. Çавăн пек руководительсен айăпĕпе чылай колхозсенче тырпул япăх пулать.

Агротехникăна çиелтен пурнăçа кĕртсе пынине партипе правительство сиенлĕ ĕç вырăнне хурса сивлеççĕ. Кашни колхозăн вырăнти условийĕсене кура, 1945 çулхи çуракине ирттермелли агротехника мероприятийĕсене татăклăн палăртса хумалла, вĕсене колхоз правленийĕн ларăвĕнче тата колхозниксен пĕрлешÿллĕ пухăвĕнче сÿтсе явса çирĕплетмелле.

Ял Совет председателĕсем агротехника мероприятийĕсен планне пурнăçа кĕртес ĕçе организацилекенсем пулса тăмалла. Хăйсен ларăвĕсенче партипе правительство кăтартса панă плансене мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен колхоз председателĕсен доклачĕсене тăтăшах итлесе сÿтсе-явмалла.

Вăйлă тырпул туса илмелли çирĕп никĕс тăвас шутпа, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ партипе совет тата çĕрĕç органĕсене кашни колхозрах вăрлăх участокĕсем уйăрса хăварма хушрĕç. Çураки пусланиччен вăрлăх участокĕсене кăтартса панă виçĕ чухлĕ хире тухса палăртмалла, вĕсене уйрăм звеносем çумне актсем çырса çирĕплетмелле.

Малта пыракан колхозсем, вырăнти удобренисемпе анлăн усă курса, тырпул тухăçлăхне çулран-çул ÿстерсе пыраççĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ кашни района вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттармалли плансем пачĕç. Анчах хăшпĕр районсем çав паха ĕçе халĕ те хакламасăр тăраççĕ-ха. Уйрăмах куçнепе Çĕмĕрле, Кувакино, Пăрачкав, Улатăр, Йĕпреç районĕсенче ĕç япăх пырать.

Вырăнти удобренисене хакламаннине уйрăмах халĕ, минераллă удобренисем çителĕксĕр чухне, тÿсме çук.

Вильямс академик çапла каланă: «Тĕрĕс пусуçаврăнăшĕ — тăпрана лайăхлатмалли, тырпул тухăçлăхне ÿстермелли, апат-çимĕç базине организацилемелли, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстермелли, колхозсемпе совхозсенчи ĕç тухăçлăхне хăпартмалли хăватлă май пулса тăрать», тенĕ. Юлашки çулсенче çак ыйту çине сÿрĕк çаврăнса пăхнă.

1945 çулхи план мĕнпур тырпулсене пусуçаврăнăшĕсенче пĕтĕмĕшпех тĕрĕс вырнаçтарса тухма май парать. Çĕртме пуссине акма кăçалхи çул эпир куракăн вăрлăхĕсем чылай сыхласа хăвартăмăр. Нумай çул хушши ÿсекен курăксем акмалли плана пирĕн пĕр пăркаланмасăрах пурнăçа кĕртмелле. Унсăр пусуçаврăнăшĕсене çĕнĕрен юсаса йĕркене кĕртме май çук. Чылай кохозсенче пирĕн шалти çĕрйĕркелÿ ĕçĕсене туса ирттермелле, мĕнпур колхозсене çĕрпе усă курас ĕçе пĕтĕмĕшпех йĕркене кĕртмелле.

Пĕлтĕр республикăри чылай колхозсем, малта пыракан агротехникăна тĕрĕс пурнăçа кĕртсе, çĕрулмипе пахча-çимĕçсен тухăçлăхне ÿстерчĕç. Анчах пĕтĕмĕшпе илсен, республикăра çĕрулмипе пахча-çимĕçсем лартса тăвас ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Кунта та вăрлăх чи пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа ĕнтĕ ахаль вăрлăхсене сортлă вăрлăхсемпе улăштарас ĕçе анлăн сарни кирлĕ. Обезличкăна пĕтерес тесе, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем акнă çĕр лаптăкĕсене яланлăхах уйрăм звеносем çумне, звеносенче вара уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетмелле.

Çавăн пекех вăрçă вăхăтĕнче пысăк вырăн йышăнса тăракан кок-сагыз, махорка, йĕтĕнпе кантăр культурисене акса тăвасси çине те тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Çуракине ăнăçлăн туса ирттерес ĕçе колхозниксене участоксем тăрăх ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухни татса парать. Ĕçе юрăхлă пур колхозниксене те колхоз производствине активлăн явăçтармалла. Правительство тунă ĕçкунĕсен минимумне кашни колхозник тултармалла тата ирттерсе тултармалла. Ĕç тухăçлăхне ÿстерме уйрăм сдельщина вăйлăн пулăшать. Çуракинче çав паха меслетпе анлăн усă курмалла.

Колхозсенче çуракине ирттерес ĕçре хĕрарăмсем тĕп вырăн йышăнса тăнине шута илсе, уйхир ĕçĕсен тапхăрĕ валли ача яслисемпе площадкисене организацилес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла.

Çаксем пурте—ял Совечĕсен ĕçĕсем.

Пирĕн умра вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи пысăк задачăсем тăраççĕ. Пур ыйтусем çине те государство хушнă пек пăхсан, хамăра тивĕçлĕ вырăна тупса йышăнсан, эпир çав задачăсене пурнăçа кĕртме пултаратпăр.

Чăваш республикинчи государство влаçĕн вырăнти органĕсем ял Совечĕн авторитетне ÿстерес ыйтăва сÿтсе-явнă çĕре активлăн хутшăнчĕç. Республикăри нумай районсенче колхозсене ял Совечĕсем енчен ертсе пырас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе чылай паха мероприятисем палăртса хучĕç.

Государство влаçĕн кирек мĕнле органĕн те, вăл шутра ял Совечĕн те авторитечĕ хăйне хушнă ĕçе ăслăн та йĕркеллĕн, конкретлăн ертсе пынинчен килет. Хальхи хĕрÿллĕ тапхăрта ял Совечĕ пĕтĕмĕшллĕ решенисем кăна йышăнса ларсан, унăн сасси пушă сасă кăна пулать. Анчах ял Совет председателĕ ялти актив çине таянса ĕçлесе, çуракине хатĕрленнĕ çĕре тимлĕн хутшăнса пырсан, кашни колхозри лару-тăрăва тĕплĕн пĕлсе тăрсан, колхоз руководителĕсене ĕçри çитменлĕхсене мĕнле пĕтермеллине кăтартса пама пĕлсен, унăн сăмахĕ авторитетлă пулать, ĕççыннисем ăна итлекен тата хаклакан пулаççĕ.

Ял Совечĕсем колхозсене государство енчен ертсе пырассине пурнăçа кĕртмелле. Çакă вăл ял Совечĕсем колхозсен вăйне государство планĕсене пурнăçа кĕртнĕ çĕре пĕлсе мобилизацилессине, колхозсен ĕçне куллен сăнаса пырассине, колхозсене малалла ÿссе тĕрекленме пулăшассине пĕлтерет. Ял Совечĕ колхозсенчи массăллă-политикăллă мероприятисене тата пуринчен малтан социализмлă ăмăртăва организацилекен пулмалла.

Малта пыракан ял Совечĕсем, совет государствин ертсе пырас ĕçĕнчи тĕрĕсленнĕ формисемпе пĕлсе усă курса, совет ĕçне колхозла ялти актива тата совет интеллигенцине анлăн явăçтарса пырса, ĕçре паха çитĕнÿсем тăваççĕ. Вĕсем куллен хи ĕçе депутатсене явăçтараççĕ, хăйсен территорийĕ çинчи организациллĕ массăллă ĕçе çирĕп ертсе пыраççĕ. Ял Совечĕ активран татăлса кайсан, унăн решенийĕсене колхозлă ялти актив йышăнса илмесен, ял Совечĕн авторитечĕ пирки калаçмалли те çук. Халĕ ял Совечĕсем çумĕнчи яланлăх комиссисене пурне те ĕçлеттерме тытăнмалла, çав комиссисем çук çĕрте вĕсене организацилемелле, вĕсен ĕçне оперативлăн ертсе пымалла.

Çураки ĕçĕсем тĕлĕшпе, ялхуçалăх комиссийĕн кăна мар, çавăн пекех тата культурăпа çутĕç, администраци комиссийĕсемпе ытти тĕрлĕ комиссисен те ĕçлемелле.

Пирĕн республикăра Тăван çĕршывшăн тÿрĕ кăмăлпа ĕçленин тĕслĕхне кăтартакан, государство умĕнчи хăйсен тивĕçлĕхне тарăнăн ăнланса ĕçлекен, колхоз хресченĕсене фронта пулăшма пĕлсе организацилекен ял Совет председателĕсем сахал мар.

Чурачăк районĕнчи Янчуллă ял Совечĕ (председателĕ Львов юлташ) çуракине хатĕрленес ĕçе лайăх ертсĕ пырать. Çав ял Советне кĕрекен 7 колхозра пуринче те вăрлăхсем çителĕклĕ хатĕрлесе хунă, вĕсене акмалли кондицие лартнă. «Венера» тата «Большевик» колхозсенче клевер вăрлăхĕ çитмен пулнă. Ял Совечĕ çав вăрлăха ытти колхозсенчен улăштарса илессине организациленĕ. Пур колхозсенче те производство планĕсене туса колхозниксен пĕрлешÿллĕ пухăвĕнче сÿтсе-явса çирĕплетнĕ. Колхозсенче агрокружоксем план тăрăх йĕркеллĕ ĕçлесе пыраççĕ. Ял Совечĕ совет ĕçне ялти актива анлăн явăçтарать. Вăл колхозсенчи пур ĕçсемпе те тимлĕн интересленет. Çавăн пекех Çĕрпÿ районĕнчи Вĕрмер ял Совечĕ те (председателĕ Елисеева юлташ) колхозсен ĕçне лайăх ертсе пырать. Кун пек тĕслĕхсене татах та нумай кăтартса пама пулать. Вĕсен шутне Шупашкар районĕнчи Шăмăш, Елчĕк районĕнчи Сăръел, Етĕрне районĕнчи Чакачар, Вăрнар районĕнчи Иртеменкасси ял Совечĕсем кĕреççĕ. Анчах та пирĕн колхозсене япăх ертсе пыракан, государство влаçĕн вырăнти органĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнайман ял Совечĕсем те сахал мар-ха.

Çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе ирттерес ĕçре власть вăйĕпе пĕлсе те туллин усă куракан ял Совет председателĕсем питех те тĕрĕс тăваççĕ. Пирĕн пур ял Совечĕсен те Михаил Иванович Калинин кăтартса панă пек хăйсен организаторла вырăнне йышăнмалла.

Кăçалхи июнĕн 24-мĕшĕнче Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикине тунăранпа 25 çул тултарать. 1945 çулта государствăн ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттермелли тата общественлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртессишĕн пирĕн колхозсем республика 25 çул тултарнă ятпа социализмлă ăмăртăва тухаççĕ. Çакăнпа пĕрлех эпир Мари республикипе ăмăртатпăр.

Колхозсемпе ял Совет руководителĕсен тивĕçĕ—колхозлă ялта социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырса, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене хамăр илнĕ обязательствăсене пурнăçланă çĕре мобилизацилесси пулса тăрать. Пирĕн хамăр орденлă республика 25 çул тултарнине пур ĕçре те çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илмелле, çапла вара ылханлă тăшмана çапса аркатас ĕçре тăван Хĕрлĕ Çара пулăшмалла.

Çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе çитсе, ăна агротехника кăтартнă пек пахалăхлăн ирттерсе, пулас тырпулăн—çĕнтерÿ тырпулĕн çирĕп никĕсне хывса хăварар.

ÇУРАКИ УМĔН

Клевер акаççĕ

СЕНТЕР, апрелĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсенче те клевер акма тытăнчĕç. «Çĕнĕ Юнкă» колхоз 20 гектар, Сĕнтĕрти «Ударник» колхоз—22 гектар, Каганович ячĕпе тăракан колхоз—16 гектар, Юнкă ял Советĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз 4 гектар клевер акса хăварнă.

Г. МОИСЕЕВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, апрелĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Чылай колхозсем клевер акма пуçларĕç. Тусай ял Советĕнчи «Чеҫай» колхоз 30 гектар, Степан Разин ячĕпе тăракан колхоз—15 гектар, «Труженик» колхоз — 12 гектар, Молотов ячĕпе тăракан колхоз—9 гектар клевер акнă. Районри ытти колхозсем те паян-ыран клевер акма тытăнаççĕ.

Ив. ХАТАЕВСКИЙ.

* * *

КУСЛАВККА, апрелĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Çÿлти Куснарти «Красная Чувашия» колхоз паянхи кун тĕлне 22 гектар клевер акрĕ. Клевер акас ĕçре А. Николаевăпа Г. Антонов юлташсем кулленхи нормăна ирттерсе тултараççĕ.

«Красная Чувашия» колхоз паян 10 гектар кĕрхи тырăсене кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тăкса апатлантарчĕ.

Н. АНИСИМОВ.

Колхозсем пĕр-пĕрне вăрлăх парса пулăшаççĕ

Чкаловски районри малта пыракан колхозсем хăйсен районĕнчи вăрлăх ситмен колхозсене тырă парса пулăшаççĕ. Сăмахран, «РОКК» колхоз 150 центнер, Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 180 центнер, «Гвардеец» колхоз 300 центнер, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 120 центнер, Сталин ячĕпе тăракан колхоз 250 центнер, Нариманов ячĕпе тăракан колхоз 160 центнер панă.

* * *

Тăвай районĕнчи колхозсем, пĕтĕмĕшпе илсен, вăрлăх çителĕклĕ хывнă. Чăн та, вăрлăхлăх çĕрулми 1971 центнер çитмест, анчах ăна колхозниксенчен пухса тата кÿршĕри колхозсенчен илсе çитерме шутлаççĕ.

Уйрăм колхозсен тырă вăрлăхĕсем те çитмеççĕ. Сăмахран, «25 лет Октября», «Звезда», Максим Горький ячĕпе тăракан колхозсен тырă вăрлăхĕ çитмест.

Малта пыракан колхозсем вĕсене вăрлăхлăх тырă парса пулăшаççĕ. «25 лет Октября» колхоза районри ытти колхозсем 110 центнер вăрлăх параççĕ тата хăшпĕр колхозсем хăйсен вăрлăхĕпе тата хăйсен лашисемпе акса пама пулаççĕ.

Максим Горький ячĕпе тăракан колхозăн та вăрлăх çитмест, Молотов ячĕпе тăракан колхоз ăна 30 центнер т. ыт. колхозсем 25 центнер вăрлăх параççĕ.

Çамрăксен литература вечерĕ

Апрелĕн 8-мĕшĕнче, Шупашкарта, «Динамо» клубĕнче литература вечерĕ пулса иртрĕ. Çамрăк вырăс поэчĕсем хуларн çамрăксемпе тĕл пулчĕç.

Вечера А. Эсхель юлташ кĕске сăмах каласа уçрĕ. Вечерăн программинче фронтпа тылри паттăрсем çинчен çырнă сăвăсемпе юрăсем пулчĕç. Çамрăк поэт, Отечественнăй вăрçă инваличĕ Александр Ежов «Родная Чувашия», «Письмо инвалида» сăвăсене, Виктор Нерубенко «В белом парке», «Мастер», «Письмо с Украины» сăвăсене, Валентина Чаплина «Сталинград», «Когда замолкают на время бои», «Эх, играй, паренек» ятлă сăвăсене вуласа пачĕç. Çамрăк чăваш поэчĕ, Отечественнăй вăрçă инваличĕ Валентин Урташ «Итле, салтак» сăвва вуласа пачĕ. Итлекенсем çав сăвăсене пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç. Çамрăк поэт Григорий Каверин юратупа туслăх çинчен лирикăллă сăвăсем вуласа пачĕ.

Пĕр заводри художествăллă пултарулăх коллективĕн солисткисем Е. Калинкина тата А. Каневская юлташсем вырăс тата Украина юррисене питех те кăмăллăн юрласа пачĕç.

Çавăн пекех Моховпа Берман юлташсем те паянхи кунпа çыхăнса тăракан политсатирăна аван каласа пачĕç. Пĕр заводри художествăллă пултарулăх коллективĕн солисчĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе Орлов-Шуçăм композитор чылай вăй хурса ĕçленине палăртмалла.

Литература вечерĕ кăмăллăн та хавхаланулăн иртрĕ. Вечера пынă çамрăксем çавăн пек творчество вечерĕсене татах та ирттерме сĕнчĕç. Вечерта пухнă укçа-тенке пĕтĕмĕшпех фронтовиксен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инваличĕсене пулăшнă çĕре хываççĕ.

Отечественнăй вăрçă инваличĕсене пулăшаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Райсовет исполкомĕн социальнăй обеспечени отделĕ кăçал Отечественнăй вăрçă инваличĕсене 25 мăшăр çăматă, 9 кĕрĕк пинцак парса пулăшнă. Пенси укçине 65.765 тенкĕ тÿленĕ.

Оперетта лартма хатĕрленеççĕ

Чăвашсен Государство Академи театрĕн Калининăри филиалĕ Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕн Н. Айзманăн «Хĕвеллĕ кунсем» ятлă оперettине хатĕрлеме тытăннă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Твенте каналĕ хĕрринчи укреплени енчен наступлени туса пыракан союзниксен çарĕсем Зюдфен Девентер çулĕ çине тухнă та хальь Девентертен 2 мильăра тăраççĕ. Малалла 24 километр кайнă хыççăн союзниксен чаçĕсем Меппен хулине йышăннă. Унтан кăнтăртарахра Линген хулине тăшмантан тасатнă. Линген районĕнче Эмс шывĕ çинче укреплени туса хунă.

Вăтам Германире союзниксен çарĕсем Лангензальц хулине пырса кĕнĕ. Союзниксен ытти чаçĕсем Гота хулинчен 11 километрта тăраççĕ. Рур «миххинчен» хĕвелтухăçнерехре темиçе пункт йышăнса илнĕ, вĕсем хушшинче—Гамм хули. Çавăн пекех тăшмантан Эйзенах хулине тасатнă.

Унтан кăнтăртарахра Вюрцбург хулине ирĕке кăларнă. Союзниксен чаçĕсем вăл хуларан çурçĕрелле тата кăнтăралла чылай куçнă. Гейльбронн хулин çуррине йышăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, союзниксен çарĕсем Эмс шывĕ çинчи Меппен хулине пырса кĕнĕ. Кунтан пăртак кăнтăртарахра çав шыв хĕрринчи Линген районĕнчи укреплениe аслăлатнă. Рейнтан çурçĕрхĕвелтухăçнерехре союзниксем Хопстен хулине йышăннă тата вăл хуларан хĕвелтухăçнерехре малалла кайнă.

Бремен хулинчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Зулинген тата Зиденбург хулисем витĕр тухнă.

Везер шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре, Минден хули çывăхĕнче, союзниксем 19 километр ытла малалла кайнă. Везер шывĕ хĕрринчи Хамельн районĕнчи укреплениpен татса тухса, союзниксен танкĕсем Шуленберг тата Эльце хулисене йышăннă, Хазеде хули патне çитнĕ. Тăшманăн Хамельн хулинчи хирĕç тăракан узелĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Кунтан кăнтăртарахра союзниксем Везер шывĕн хĕвелтухăç çыранĕнчи Хольцминден хулине хирĕç ларакан Штале хулине йышăннă.

Везер шывĕн хĕвеланăç çыранĕнче союзниксен çарĕсем Лаубах çывăхĕнчи автомагистраль çине тухнă. Союзниксен пехоти Виценхаузен хулинчен 6,5 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăрать.

Мюльхаузен хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксем Штрут хулине йышăннă. Зуль хулинчен кăнтăртарахра Шлейзинген хулине йышăннă.

Рур «миххине» пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Зиген хулине тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă. Союзниксем Зиген хулинчен 2,5 миля хĕвеланăçнерехре Зиг шывĕ урлă çĕнĕ каçă хывнă.

Фульд хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, тăшман хирĕç тăнине сире-сире пырса, союзниксем 16 километр малалла кайнă. Союзниксен танковăй чаçĕсем, 32 километр куçса, Гельбронн хулинчен хĕвелтухăçнерехри Крайльсгейм хули патне çитнĕ. Карлсруэ хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксем 13 километр ытла малалла кайнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраш ĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Итали фрончĕн Адриатика секторĕнче, Комакесо кÿллипе Рено шывĕ хушшинче татах малалла кайнă. 200 çынна тыткăна илнĕ.

НИМĔÇСЕМ ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНТЕНЧЕ ЙЫШЛАН ТЫТКĂНА ПАРАНАÇÇĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерĕве парать. Пĕлтерÿре каланă тăрăх, апрелĕн 5-мĕшĕнче Хĕвеланăç фронтĕнче нимĕçсен 40.107 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Апрель уйăхĕн малтанхи пилĕк кунĕ хушшинче союзниксене 146.723 нимĕç салтакĕпе офицерĕ тыткăна панă.

СОЮЗНИКСЕМ РЕЙХСБАНКĂН ЫЛТТĂН ЗАПАСНЕ ТЫТСА ИЛНĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин американецсен 3-мĕш армийĕн чаçĕсемпе пĕрле çÿрекен корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Мюльхаузенран кăнтăртарахра тăвар кăларакан шăтăксенче 90-мĕш дивизин салтакĕсем Германин импери банкĕн ылттăн запасне тупнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Германи Мюльхаузен çывăхĕнче тупнă ылттăн запасĕ 100 тоннăна яхăн шутланать. Кунсăр пуçне, тăвар кăларакан шăтăксенче 3 миллиард марка хут укçа, 2 миллион Америка долларĕсем, 100 миллион франк, 110 пин кĕренке Англи стерлингĕсем тата Испани, Турци, Португали, Норвеги укçисем пулнă.

ДИТРИХА ВĔЛЕРНИ

РИМ, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Римри радио пĕлтернĕ тăрăх, Германин Вена оборонин начальникне, эсэсовецсен çарĕсен генерал-полковникне Дитриха апрелĕн 6-мĕшĕнче каçхине 22 сехет иртсенех вĕлернĕ. Дитрих генерала револьверпа 7 хут пĕтĕ çывăхран персе вĕлернĕ.

Швейцарирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Дитрих Венăри радиостанцие Австри столицинчи халăха «юлашки вăй юлмиччен хирĕç тăма» чĕнмешкĕн кайма тухнă пулнă. Вара ăна çавăнта кайнă чухне вĕлернĕ.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕН ГОСУДАРСТВО ДЕПАРТАМЕНЧĔ САН ФРАНЦИСКĂРИ КОНФЕРЕНЦИЕ ЮГОСЛАВИ ХУТШĂНАССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство департаменчĕ Сан-Францискăри конференцин ĕçĕсене хутшăнма Югослави правительстви килĕшни çинчен пĕлтернĕ. Югослави делегацине Шубашич ертсе пымалла.

Халичен Сан-Францискăри конференцие пыма 44 çĕршыв килĕшнĕ.

ФИНЛЯНДИН ÇĔНĔ СЕЙМĔН ОРГАНИЗАЦИЛЛĔ ЛАРĂВĔ

ХЕЛЬСИНКИ, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Паян çĕнĕ сеймăн организациллĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Сеймăн председательне тата икĕ вице-председательне суйланă.

Сейм председателĕ пулма Фагерхольм социал-демократа суйланă, уншăн 191 сасă панă. Пĕрремĕш вице-председатель пулма Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕн депутатне Кай Сундстрема суйланă. Уншăн 152 сасă панă. Иккĕмĕш вице-председатель пулма аграри союзĕн депутатне Вестеринена суйланă, уншăн 192 сасă панă.

Суйлавсен результатне пĕлтернĕ хыççăнах Фагерхольм, Кай Сундстрем тата Вестеринен присяга текстне вуласа панă.

Апрелĕн 7-мĕшĕнче чаплă обстановкăра сейм уçăлмалла.

Грецири лару-тăру

АФИНЫ, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх ирĕклĕхĕн политика комитечĕн (ПЕА-н) членĕсем пулса ĕçленĕ çынсем (ПЕА вăл Грецие нимĕçсем оккупациленĕ вăхăтра Грецин партизансем йышăннă районĕсенче администраци ĕçĕсене туса тăнă) тата Папандреу правительствинчи сулахайри министрсем Дамаскинос регент патне тата премьер-министр Пластирас патне кайса ăна меморандум панă. Унта вĕсем тăшмана хирĕç тăрса кĕрешес ĕçе хутшăннă çынсене хĕсĕрленине хирĕç протестлеççĕ. ПЕА органĕсенче ĕçленĕ çынсене хĕсĕрлени «оккупантсене хирĕç пынă ирĕклĕх юхăмне сивлени тата Афинăри пуканелле правительствăсене законлă власть вырăнне шутлани пулать», тенĕ.

Меморандумра малалла çапла каланă: правительство органĕсем правительствăпа ЭАМ (Варкизри наци ирĕклĕхĕн фрончĕ) тунă килĕшÿ условийĕсене пурнăçа кĕртмеççĕ, çавăн пирки те террорла организацисене япăх пример кăтартаççĕ, тенĕ. Сăмахран, килĕшĕве пăхăнмасăр, ЭЛАС-ра (ЭАМ-ăн çар организацийĕнче) пулнă Греци офицерĕсене çар службинчен кăларса янă (ЭЛАС-ăн 80 полковникне çартан кăларнă). Çав вăхăтрах «сыхлав батальонĕсенче» (Раллисăн пуканелле «правительстви» туса хунăскерсенче) тăнă офицерĕсем халĕ те çартах тăраççĕ. «Ту бригади» те çаплах юлать. Демократ-служащисене, «вĕсем политика енчен шанчăксăр» тесе, ĕçрен кăлараççĕ. 1917 çулта граждан ирĕклĕхне хирĕç кăларнă законсем халĕ те пурнăçа кĕрсе пыраççĕ, Варкизра правительство вăл законсене пăрахăçа кăларма пулнăччĕ. Çĕршыври лару-тăру Пĕрлешÿллĕ нацисен принципĕсене хирĕç пырать тата Греције пĕтĕм тĕнче умĕнче намăс кăтартать.

ПЛАСТИРАС ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афинăран çапла пĕлтерет: Пластирас правительстви вырăнтан тухнă. Регент тинĕс-çар флочĕн командующине тата тинĕс министерствин руководительне Вулгарис адмирала çĕнĕ правительство тума ыйтнă.

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ЯПОНИ ХУШШИНЧИ НЕЙТРАЛИТЕТ ПАКТНЕ ПĂРАХĂÇЛАНИ ÇИНЧЕН ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ МĔН КАЛАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ирхинехи хаçатсем Совет Союзĕпе Япони хушшинчи нейтралитет пактне пăрахăçа кăларни çинчен пĕлтернине пĕррремĕш страницăра пĕтĕм страница сарлакĕш заголовоксемпе пичетлесе кăларнă.

«Нью-Йорк таймс» тата «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатсем Совет Союзĕ тунă заявлени çинчен хăйсен умстатьисенче çыраççĕ; çавăн пекех Вашингтонпа Лондонран темиçе корреспондент пĕлтернисене пичетлеççĕ. Вăл пĕлтерÿсенче Совет Союзĕпе Япони хушшинчи нейтралитет пактне пăрахăçа кăларнă хыççăн Лăпкă океанри событисем малашне мĕнле аталанса пырасси çинчен хăйсен шухăшĕсене каласа панă.

ВАШИНГТОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕпе Япони хушшинчи нейтралитет пактне пăрахăçа кăларни çинчен хăйĕн шухăшне каласа пама ыйтсан, пичет представителĕсене государство департаменчĕ çапла каланă: «Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви, паллах ĕнтĕ, çак ĕçе ырлать».

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕ хушшинчи нейтралитет пактне пăрахăçа кăларни çинчен сенатăн ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕн председателĕ Коннэли çапла каланă: «Совет Союзĕ Японипе нейтралитет тытмалли пакта пăрахăçлани çинчен эпĕ савăнсах пĕлтĕм. Совет Союзĕ тунă заявлени ыйтăва уççăн та ăнланмалла кăларса тăратнă. Россия çине пĕр сăлтавсăрах тапăннă Германие Япони пулăшса тăнă пирки тата вăл Россине союзникĕсене хирĕç, Англипе Пĕрлешÿллĕ Штатсене хирĕç вăрçнă пирки пакта малалла тăсма май килменни курăнсах тăрать. Вăл килĕшĕве Япони малалла тăсмалла мар туса хучĕ».

Пичет представителĕсен ыйтăвĕсем çине ответлесе, Коннэли çапла каланă: Совет Союзĕ Японипе тунă пакта пăрахăçлани Сан-Франциско хулинчи конференцие ăнăçлă ирттерме пулăшать, тенĕ.

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, демократсен лидерĕ Беркли сенатор—Совет Союзĕ тунă ĕç кăмăла каять, тенĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви хăйĕн обзорĕнче çапла калать: Япони правительстви вырăнтан тухни тата çавăн хыççăнах Совет правительстви заявлени туни ахальтен мар пĕр вăхăтра пулнă.

ПАРИЖ, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Парижри хаçатсем Совет Союзĕпе Япони хушшинчи нейтралитет пактне пăрахăçа кăларни çинчен пĕлтерекен хыпара чылай пысăк вырăн параççĕ.

ХРОНИКА

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ К. Б. Новиков тата С. К. Царапкин юлташсене СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн коллегийĕн членĕсем пулма уйăрса лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00059 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000